Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

49 (8009) № ✻ Шăмат кун, 2012 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 30-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ял çынни валли – илемлĕх салонĕ

Муркаш райповĕ халăха кирлĕ услугăсемпе яланах пахалăхлă тивĕçтерет. Çакна районта пурăнакансем те, Муркаш тăрăхĕнче пулакан хăнасем те çирĕплетеççĕ.

Кĕçнерни кун акă райпо «Мечта» илемлĕх салонĕ уçрĕ. Вăл малтанхи Йăла çурчĕн иккĕмĕш хутĕнче вырнаçнă. Юсаса çĕнетнĕ çуртăн илемлĕ пӳлĕмĕнче хăйсен ĕçĕнче пысăк опыт пухнă тăватă парикмахер вăй хума тытăнчĕ: Марина Шатрова (сăн ӳкерчĕкре), Надежда Иосифова, Татьяна Антонова тата Ирина Андреева. Вĕсен ĕçне кăмăлланăран кунта çӳç кастарма тата парикмахерскинчи ытти услугăсемпе усă курма килекен нумай пуласси иккĕлентермест. Кунсăр пуçне кунта маникюрпа педикюр та тума тытăнаççĕ. Хакĕсем район центрĕнчи ытти çĕрти пекех. Анчах та июль уйăхĕнче кунти клиентсем валли хаксем 5 процент йӳнĕрех пулаççĕ – ятарлă акци пырать. Юнашарах акă сывлăх пӳлĕмĕ те ĕçлеме пуçлĕ.

– Парикмахерски – райпошăн çĕнĕ услуга. Анчах та эпир çак çуртăн профильне улăштармарăмăр: вăл халăхшăн ĕçлетĕр, халăха чăннипех те усă кӳтĕр, социаллă пĕлтерĕшлĕ объект пулса юлтăр, – çирĕппĕн палăртрĕ Муркаш райпо канашĕн ертӳçи Б. Андреев. Борис Васильевич каланă тăрăх çак çуртра кĕçех халăх кĕтнĕ ытти уйрăмсем те уçăлĕç: аслисен кăна мар, ача-пăчан, спорта юратакансен ыйтăвĕсене те райпо çитес кунсенчех уйрăммăн тивĕçтерме тытăнĕ.

Хальлĕхе вара пурте парикмахерскине çитсе килĕр: илемлĕ те хăтлă пӳлĕм, парикмахерсен пысăк пахалăхлă ĕçĕ пурин кăмăлне те хăпартĕ.

Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.

Черетлĕ çитĕнӳ

Июлĕн 3-мĕшĕ – ГИБДД кунĕ

ÇУЛ-ЙĔР ХĂРУШСĂРЛĂХĔН ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире професси кунĕ – Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерствин ГАИ (ГИБДД) кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Эсир питĕ пархатарлă ĕç тăватăр: çул çинчи хăрушсăрлăха тивĕçтеретĕр. Çула тухнă водительсене ытти çынсен пурнăçĕ вĕсем йĕркене пăхăннинчен нумай килни, вĕсем пассажирсемшĕн те, çуран çӳрекенсемшĕн те питĕ яваплă пулса тăни çинчен аса илтеретĕр, асăрхаттаратăр. Саккуна пăхăнман водительсене тупса палăртса вĕсене руль умне ларма чаратăр. Çапла майпа вуншар-çĕршер çынна инкеке лекесрен сыхлатăр. Тавах сире çакăншăн.

Çил-тăман-и, татти-сыпписĕр çумĕр лӳшкеть-и, ĕç кунĕ-и е канмалли кун – эсир яланах службăра. Çăмăл ĕç мар вăл – çул-çинчи, обществăлла йĕркелĕхе сыхласси, гражданасен сывлăхĕпе пурнăçне, вĕсен Конституципе панă прависене хӳтĕлесси. Эсир хăвăр тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçланăран тата ытти тĕрлĕ преступленисене те сирсе яма, тунă преступленисене уçса пама пулăшатăр.

Эсир малалла та нимĕнле хăрушлăха пăхмасăр çирĕп чунлă, хастар та хăюллă пуласса, районти, çул çинчи лăпкăлăха сыхласса шанса тăратăп.

Водительсен çулĕ такăр та уçă пултăр. Сирĕн те пурнăç çулĕ уçăлсах пытăр. Ĕçлес кăмăл пĕрре те ан иксĕлтĕр. Килте вара сире яланах ăнланччăр, юратчăр. Пурсăра та çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей сунатăп.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.

Раççейре

Виççĕмĕш ачаран пуçласа вăл виçĕ çул тултариччен

РФ ĕç тата социаллă хӳтлĕх министрĕ Максим Топилин 2013 çултан çемьери виççĕмĕш ачашăн уйăхсерен тӳлекен пособие ача 3 çул тултариччен парасси çинчен пĕлтернĕ.

Тӳлев виçи мĕн чухлĕ пулать тесе ыйтсан вăл çапла каланă: «Ачан пурăнмалли минимумĕпе танлашать. Кашни регион ăна хăй палăртать. Вăтамран вăл 7 пин тенке яхăн».

Нумай ачаллă çемьесене патшалăх пулăшма тăрăшать. Раççейри амăш капиталĕ, регионсенчи амăш капиталĕ, тӳлевсĕр çĕр уйăрса пани, хваттерпе тивĕçтерни пĕлтерĕшлĕ пулăшу пулнине палăртмалла.

Виçĕ çул таранччен паракан пособие çемьери виççĕмĕш тата хыççăнхи ачасемшĕн тӳлеççĕ.

Кĕтнĕ указ

ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев июнĕн 27-мĕшĕнче «Виççĕмĕш е ун хыççăнхи ача çуратнă çемьесен уйăхри укçа тӳлевĕ çинчен» Указа алă пуснă.

Унпа килĕшӳллĕн 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен виççĕмĕш е ун хыççăнхи ачашăн уйăхсерен, ача виçĕ çул тултариччен, пособи тӳлеме пуçлаççĕ. Унăн виçи республикăри ачасене пурăнма кирлĕ виçепе танлашать. Паян вăл – 5202 тенкĕ.

Çак тӳлеве республикăра çирĕплетнĕ кашни çынна пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен (5276 тенкĕ) сахалрах тупăшлă çемьесене параççĕ. Тепĕр самант – тӳлеве 2012 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕ хыççăн çуралнă ачасем тивĕçеççĕ.

Çак указ вăя кĕни ялсенче нумай ачаллă çемьесем йышланасса шантарать.

Еçпе тивĕçтерекен центрта

Çĕнĕлĕх: «Электронлă ĕç паракан»

Тĕрлĕ формăллă очетсене кирлĕ çĕре Интернет урлă тăратасси паян чылайăшĕн ĕç йĕркине кĕчĕ ĕнтĕ. «Электронлă ĕç паракан» сервис çак ĕçе ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсене информаци тăратас тĕлĕшĕнчен татах та çăмăллатма пулăшĕ.

Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕнче халăха ĕçпе тивĕçтересси çинчен» саккунĕн 25 статйипе килĕшӳллĕн ĕç параканăн ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсене тĕрлĕ информаци тăратмалла: вакантлă ĕç вырăнĕсем пуррипе çуккине, ĕçе инвалидсене илмелли квотăна тултарнипе тултарманнине, организацие пĕтерме йышăннине е уйрăм предприниматель ĕçхĕлне пăрахăçлама йышăнассине тата ыттине те.

Информаци вара бланк çине çыриччен электронлă майпа йĕркелеме çăмăлрах, хăвăртрах пулать. Мĕншĕн тесен çĕршывра йышăннă йĕркепе хатĕрленĕ программăсем йăнăшсене те çийĕнчех тӳрлетме май параççĕ. «Электронлă ĕç паракан» программăн лайăх енĕсем чылай: ĕçпе тивĕçтерекен центра çӳремелле мар, хут çырасси чакать, документсенче йăнăш пулмасть, вăхăт перекетленет, саккунсем улшăнсан отчет формине программа автоматика мелĕпе хăех çĕнетсе пырать. Электронлă майпа яракан информаци пысăк хӳтлĕхлĕ çыхăну каналĕсемпе килет, çавăнпа та куншăн хăрамалла мар.

Паянхи кун районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ĕç паракансенчен отчетсене электронлă майпа йышăнма хатĕр. Кăçалхи августăн 1-мĕшĕччен ятарлă акци пырать. Организацисем «Электронлă ĕç паракан» программăпа тӳлевсĕрех усă курса ĕç чăннипех те çăмăлланине тĕрĕслесе пăхма пултараççĕ. Программăна вырнаçтарас ыйтупа районти ĕçпе тивĕçтерекен центра пыма е 63-0-59 тата 62-3-42 номерсемпе шăнкăравласа пĕлме пултаратăр.

Программа пирки тĕплĕнрех http://er.regiontrud.ru/home.aspx ресурсра тупса вулама пултаратăр.

И. ДИМИТРИЕВА, районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи.

Çитес хĕл умĕн

Юсама пуçламалла

Утă уйăхне кĕретпĕр. Малашлăхпа пурăнаканăн паянах çитес хĕл пирки шухăшлама тытăнмалла. Çак шухăшлав малтанах фермăсенче юсав ĕçĕсем туса ирттерессине, вылăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлессипе çыхăннă. Сарайсене хĕле хатĕрлессипе районта ырантан икĕ уйăхлăх пуçланать.

Паян хуçалăхсенчи кашни фермăрах юсавçăсен ушкăнĕсем ĕçлеççĕ пулсан, «Передовик» хуçалăхăн Ахманери сĕт ферми çитес хĕле хатĕр те темелле.

Вылăхсене хĕллехи тапхăрта тытма фермăсене юсанипе пĕрлех сарайсене шуратмалла-дезинфекцилемелле.

А. БЕЛОВ.

Поздравляем. Саламлатпăр

Коллектив ООО «Моргаушкорм» сердечно поздравляет начальника цеха ОКЦ-15 **САПТЕЕВУ Галину Николаевну** с юбилеем. Счастья тебе земного, радости – чтоб не счесть, и здоровья желаем много, не терялось бы то, что есть.

Пирĕн юратнă аттепе аннене – Рыккакасси ялĕнче пурăнакан **Капитолина Александровнăпа Михаил Алексеевич АЛЕКСЕЕВСЕНЕ** çемье çавăрса 50 çул пĕрле пурăннă ятпа чунчĕререн ăшшăн саламлатпăр. Сирĕн умăрта çĕре çити пуç таятпăр. Çирĕп сывлăхлă пулма ырă сунатпăр.

Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.

Райадминистрацире

Хисеп грамотипе наградăланă

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2012 çулхи июнĕн 18-мĕшĕнчи 533 № йышăнăвĕпе Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн Уйкас Янасалти 2-мĕш номерлĕ сĕт-çу фермин заведующине **Валентина Леонидовна АВРАМОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2012 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнчи 542 № йышăнăвĕпе «8 № «Колокольчик» ача сачĕ» шкул çулне çитмен ачасен муниципаллă бюджет вĕрентӳ учрежденийĕн воспитательне **Елена Васильевна МИЛОВИДОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Республикăра

Ыйтăвĕ чăнах та çивĕч

Июнĕн 26-мĕшĕнче Мускавра ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев РФ энергетика министрĕпе Александр Новакпа тĕл пулнă.

Каласури тĕп ыйту – «Атăл юхан шывĕ çинче Шупашкар ГЭСне тăвасси» проектпа документсене хатĕрлессине вĕçлесси. Сăмах Шупашкар шыв управне 63 метртан 68 метрлă шая çити çĕклесси пирки пырать. Унсăрăн ГЭС 60 процент хăватпа кăна ĕçлет, оборудовани хăвăртах юрăхсăра тухать. 1981 çулта ГЭСа ĕçлеттерме пуçланăранпа экономика тăкакĕ 100 млрд. тенкĕ ытла пулнă.

Михаил Игнатьев федераци министрĕнчен пулăшу ыйтнă. Мĕншĕн тесен республика территорийĕнче Шупашкар шыв управĕ таврашĕнче тухса тăнă çивĕч лару-тăрăва пула экологи хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе васкавлă мерăсем йышăнмалла.

Тĕл пулура çавăн пекех Чăваш Ен энерги перекетлес енĕпе регион программине пурнăçлама федераци бюджетĕнчен субсиди илмелли малашлăх çул-йĕре пăхса тухнă.

А. ГРОМОВА.

Çемье ăшшине сыхлакансем

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2012 çулхи çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 73 № указĕпе килĕшӳллĕн çемье институтне çирĕплетес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн мăшăрсене – Муркаш районĕнчи **Михаил Осипович Осипова** тата **Мария Степановна Осиповăна** «Юратупа шанчăклăхшăн» орденпа наградăланă.